«Сывлăх» нацпроекта пурнăçлана май

# «Малти вырăнта – халăх сывлăхĕ», –



*тесе пĕтĕмлетрĕ хамăр калаçăва кулленхи ĕç-хĕлпе паллаштарнă май Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă 2-мĕш номерлĕ район больницин тĕп врачĕ Леонид Иванович САМУШКОВ. Сывлăх хуралçин çак сăмахĕсем хыçĕнче паян пуян опыт тăрать: ĕçе йĕркелессинче те, коллектива ертсе пырассинче те. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Мăн Сĕнтĕре И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн анестезиолог дипломĕпе 1977 çулта пырса кĕнĕ. Пĕрремĕш кунранах хастарлăхпа палăрнă çамрăка 1982 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче больницăна ертсе пыма шанаççĕ. Унтанпа 25 çул хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Леонид Иванович вара чĕрĕк ĕмĕр каялла тытнă тилхепене самантлăха та пушатмасть. Ертӳçĕ пурнăç уттинчен юлманранах – Мăнсĕнтĕрсем çĕнĕлĕхсене алла илессипе малтисен ретĕнче. Çавăнпа кунти сыватăш пирки те халăхра ырă сăмах кăна çӳрет. Паян эпир Леонид Ивановичпа «Сывлăх» наци проекчĕ 2-мĕш номерлĕ район больницинче епле пурнăçланнипе калаçăпăр.*

**– Раççей Федерацийĕн Президенчĕпе «Единая Россия» политика партийĕ пуçарнипе вăй илнĕ «Сывлăх» наци проекчĕ ĕçлеме пуçланăранпа 3-мĕш çул. Çак ĕç Мăн Сĕнтĕр больници çинче еплерех курăнать, ял çыннисем туяççĕ-и ăна?**

– Эсир асăннă нацпроект ĕçлени вăл – халăх сывă пулни. Тавах çĕршыв ертӳçисене ăна вăхăтра çул панишĕн. Çынсен сывлăхĕ çирĕп-тĕк – эпир пĕр вырăнта тăмастпăр, хамăр ĕçпе малалла аталанатпăр. Сывă çыннăн производство тухăçĕ те ӳсет, экономикăпа пурнăç условийĕсем çĕнĕ шая çĕкленеççĕ. Çакă вăл – пирĕн пĕрлехи тĕллев. Ăна ăнăçлă пурнăçлама пулăшать те ĕнтĕ «Сывлăх» наци проекчĕ. Эпир те ку çултан айккинче юлмастпăр. «Сывлăх» нацпроект ĕçлеме пуçлани пĕтĕмĕшле практика врачĕн пĕлтерĕшне çирĕплетрĕ. Ку йĕркере пирĕн халĕ 2 терапевтпа пĕр педиатр тата 3 медсестра ĕçлеççĕ. Тепĕр ырă ен вăл – васкавлă медицина пулăшăвĕн службине тĕреклентерни: кунта ĕçлекенсен ĕç укçи ӳсрĕ тата васкавлă пулăшăва 3 çĕнĕ автомашина килчĕ. Ача çуратас умĕн паракан сертификат та – паянхи пурнăç çĕнĕлĕхĕ. Ăна эпир юлашки икĕ çулта 144 патăмăр. Иртнĕ икĕ çул хушшинче бюджет сферинче ĕçлекенсене диспансеризацилессипе пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр, çак ĕçе 500 ытла çынна явăçтартăмăр.

Наци проекчĕпе çывăх тăрса ĕçленипе юлашки икĕ çулта хамăр больница валли пурĕ икĕ миллион ытла тенкĕлĕх тĕрлĕ оборудовани илтĕмĕр: васкавлă пулăшу машинисем виççĕ, УЗИ аппарачĕ, икĕ ЭКГ аппарачĕ, лаборатори валли оборудовани т.ыт. те. Çак çĕнĕлĕхсене ял çыннисем те кураççĕ. Вĕсем хăйсен сывлăхĕ çине тимлĕрех пăхма пуçларĕç, çĕнĕлĕхсемпе ытларах усă курма тытăнчĕç.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх эсир нацпроектпа пĕрлех тепĕр çĕнĕлĕхе те хутшăнатăр. Сăмахăм халăха медицина пулăшăвĕ парас пахалăха ӳстерессипе республикăра ĕçлекен пилотлă проект пирки.**

– Ку вăл ĕç пахалăхне кура укçа уйăрса парассипе çыхăннă. Унпа килĕшӳллĕн килнĕ укçа ĕç укçи ӳстерме, сывату мелĕсене лайăхлатас тĕллевпе кирлĕ оборудованипе паха эмелсем туянма каять. Эсир асăннă проект çур çул кăна ĕçлерĕ пулсан та (унăн вăхăчĕ – тепĕр çур çул), çак хушăра эпир çур миллион тенкĕлĕх тĕрлĕ оборудовани туянма ĕлкĕртĕмĕр. Çапла вара халăха медицина пулăшăвĕ парас пахалăх лайăхланчĕ, медперсонал тăрăшарах та пуçаруллăрах ĕçлеме пуçларĕ.

**– Хăвăр ертсе пыракан больницăри сывату ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсемпе паллаштарни те вулакансемшĕн интереслĕ пулмалла. Камсем тăрăшулăх кăтартаççĕ çак ĕçре?**

– Сирĕн ыйтăвăр çине хуравласа пĕрне мухтаса теприне хурлас килмест. Майĕ те çук çапла тума, мĕншĕн тесен кашниех хăйсен ĕç вырăнĕнче чăн хуçа. Çĕнĕлĕхсене алла илесси те вĕсемшĕн кулленхи ĕç вырăнĕнчех. Акă В.А. Прокопьев, Н.Е. Григорьев хирургсемпе М.А. Васильев травматолог, иртнĕ çул халăха пиявкăсемпе сиплессине йĕркеленĕ С.Н. Овчинникова терапевт, мануаллă терапи врачĕ Ю.М. Трофимов, И.Р. Головкина акушер-гинеколог çĕнĕлĕхсене алла илессине кулленхи ĕç вырăнне хураççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа пурнăçа кĕрсе пыракан юлашки çĕнĕлĕх çинчен каласа хăварам. Нумаях пулмасть сыватупа физкультура кабинетне уçрăмăр. Вăл паян аслисемшĕн те, ачасемшĕн те больницăри юратнă вырăн пулса тăчĕ. Кунти ĕçсене Ю. Трофимов врач йĕркелесе пырать.

**– Леонид Иванович, эсир каласа панă тăрăх сирĕн больница пурнăç хăвăртлăхĕнчен юлмасть. Ăнăçу çулĕ малашне те çумрах пултăр!**

– Ырă сĕнӳшĕн тавтапуç.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**В. Прокопьевпа Н. Григорьев пĕрремĕш категориллĕ хирургсем тата И. Головкина акушер-гинеколог.**



**Елена Владимировна Волкова медсестра сывалаканăн юн пусăмне тĕрĕслет.**

Кун пекки те пулать

# *Машинăллă пулас тенĕччĕ те...*

«Эрех ырри патне çитермест çав», – терĕ ыйхăран вăраннă хыççăн та утиял айĕнчен тухма шутламан 19 çулхи Алексей мухмăрпа кашлакан пуççине алăпа тытса. Çĕркаç ирччене юлташĕсемпе аншарли кĕрекинче ларнăскер, каччă йывăррăн тăрса витрери шыва ланкăр-ланкăр! ĕçрĕ. Пĕр самант уçăлнă пек туйăнчĕ пулсан та, пуçри мухмăр йывăрлăхĕ çав-çавах çирĕп палăрчĕ-ха. Мĕн тумалла, ăçта каймалла? Ыйтусем нумай, хуравне вара мухмăр чарать...

Календарь çинче августăн 16-мĕшĕ. Ара кăнтăр апачĕ те иртнĕ-çке, паян Шупашкара çитмелле! Çак ĕмĕтпе Леша хăйĕн тусĕ Вова патне тухса утрĕ. Утрĕ теме лайăх-ха, анчах кашни утăм пуçри мухмăра силлерĕ, ăша пăтратрĕ. Пĕр сăмахпа каласан, чи япăх вăхăт. Юрать-ха юлташĕ килте пулчĕ. Калаçнă-тунă, тенкĕ çумне тенкĕ хушнă та çур литр эрех илме финанссем тупăннă. Унччченхи эрехрен те урăлсах çитейменскерсене çĕнĕ пулштух самаях анкăминкĕ турĕ. Çапах пуçран Шупашкар шухăшĕ тухмарĕ-ха...

Чикмерен Шупашкар çулĕ çывăхах мар. Пуçра анкăминкĕ чух автобуспа силленсе çӳресси çăмăл ĕç маррине çамрăксем лайăх туйрĕç. Канлĕ пурăнма хăнăхнăскерсем çула кайма такси тытрĕç те 14 сехет тĕлĕнче Шупашкара кайма тухрĕç. Вова водительпе юнашар вырнаçрĕ, Алеша хыçалти ларкăч çинче вырăн тупрĕ. Такси вырăнтан тапранчĕ. Кĕçех Чикме хыçа юлчĕ, Чăваш Республикине кĕрсе Мăн Сĕнтĕр витĕр те тухрĕç, умра – Мускав-Ĕпхӳ автоçул. Унпа Шупашкар еннелле пырса Катькассипе Шомик хушшинче Алеша водителе чарма ыйтрĕ, кабинăран тухса çул хĕррине ăш пăтранчăкне хăсса кĕрсен каялла таврăнмалли пирки калать. Вовăн вара Шупашкарах çитмелле. Çак калаçу кĕçех харкашăва куçать. Нихăшĕ те парăнманнине ăнланса Леша усал шухăш тытать: водителе хăйне майлă çавăрмалла, сăмахпа мар-тăк – вăйпа е... Çапла тăвать те.

Пассажирсем хăйсем хушшинчи ыйтăва татса парасса кĕтсе ларакан таксист хыçалалла кăтартакан тĕкĕр çинче Леша таксист еннелле çĕçĕпе хăмсарма пуçланине курать. Çын ретĕнчен тухнă пассажир хăй çинелле темиçе хут çĕçĕпе хăмсарсан та правур водитель пăрăнса юлать. Хăлха аманать, паллах. Унтан тухнă юн пит çăмартине юхса анать. Çакă пассажир хăрушă шухăш тытнине тепĕр хут çирĕплетет. Вăл черетлĕ хут хăмсарсан, водитель çĕçĕне алăпа ярса тытса алă тупанне те амантать. Çак вăхăтра пассажир ăна чĕркуççипе кăкăртан хыттăн тапать. Тан мар çапăçу ырăпа вĕçленмессе шанса май килнĕ вăхăтра водитель кабинăран тухса çулпа иртсе пыракан машинăсене чарма пуçлать. Ырă мара сиссе малта ларса пынă пассажир та кабинăран тухса тарать.

Хăй тытнă шухăша хирĕçлекенсем урамра юлнине ăнланса, Леша руль умне ларса машинăна каялла çавăрса Чикмене çул тытать. Мĕн пулĕ малашлăхра – эрехпе минренĕ çамрăкшăн пĕлтерĕшлĕ пулман. Машина рулĕ алăра, газ педалĕ çине пус та пус. Киле çитсен хам туянса теме те пулать... Çапла тăвать те «хастар каччă».

Акă умра икĕ сехет каялла хăй пассажир пулса ларса тухнă Чикме. Ăçта каймалла малтан? Леша «Строймаркет» обществăра тĕрлĕ ĕçсем ĕçлекен Юра юлташĕ патне çитет, машинăна нумаях пулмасть туяннине пĕлтерет тата çак ятпа пĕрле Атăла шыва кĕме пыма ыйтать. Çул çинче вĕсемпе пляжа пыракан палламан тепĕр яш пĕрлешет. Йăлтах йĕркеллĕ темелле, анчах хăй саккуна пăснине Леша çеç пĕлет. Çак вăхăтра Чикмери шалти ĕçсен пайĕнче «Перехват» операци пуçланнă та. Инçех каяймасть В.А.Киселевран вăйпа туртса илнĕ Н 944 СР 12 РУС номерлĕ ВАЗ-21122 автомашина. Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн опытлă ĕçченĕсем ăна Атăл хĕрне çитиччченех серепене çаклатаççĕ.

Çапла пулса иртнĕ статьяри чăн ĕçсем, черетлĕ преступлени. Иртнĕ кунсенче ăна район сучĕ пăхса тухрĕ. Хурахла çаратса машинăллă пулас тенĕ 1981 çулта çуралнă Алексей Николаевич Педяшевăн халĕ 5 çул та 6 уйăх кирпĕч шутлама, хăй сиен кӳнĕ çынна мораль тĕлĕшĕнчен айăп тунăшăн укçан тӳлеме тивет. Çапла суд пĕтĕмлетĕвĕ.

**Л. РУЗМИКИНА, районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн аслă следователĕ.**

Районти прокуратура пĕлтерет

# *Вĕлерессипе хăратнăшăн*

Иртнĕ çул вĕçĕнче районти пĕрремĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи Т. Салдыркина ертсе пынă суд ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта çынна вĕлерессипе хăратнă тĕслĕхе пăхса тухнă.

... 1994 çулхи августăн 10-мĕшĕнче ушкăнпа пулса темиçе çынна вĕлерме хутшăннăшăн, теприсене вĕлерме тăнăшăн тата çурта вут тивертнĕшĕн Чăваш Республикин Верховнăй Сучĕн уголовнăй ĕçсемпе ĕçлекен Суд коллегийĕ Макаçи ялĕнче пурăнакан А. Пикусова 15 çуллăха ирĕксĕр хăварнă. Малтанхи 5 çулне тĕрмере ирттернĕ хыççăн ытти срока пĕрлехи режимлă ĕçлесе юсанмалли колонире ирттернĕскер, 2004 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче вăхăт çитмесĕрех условнăй майпа 4 çул та 8 уйăх тата 23 кун маларах ирĕке тухать. Йĕркене пăснăшăн мĕнлерех айăплав кĕтнине пĕлмелле пек те, анчах...

2007 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче хайхискер çакăн пирки манса кайнă пулас. Арăмĕпе урлă-пирлĕ сăмах хыççăн вăл мăшăрне темиçе хутчен питĕнчен çапать те диван çине йăвантарса ăна мăйĕнчен пăвма пуçлать, çине-çинех вĕлерессипе хăратать. Хăранă хĕрарăм май килнĕ вăхăтпа усă курса пĕчĕк ывăлне алла илсе пӳртрен тухса тарать. Кĕсье телефонĕпе пулса иртни çинчен милицие шăнкăравласа пĕлтерет, вĕсем килсен тин киле таврăнать.

Йĕркене пăснă тĕслĕхĕн обществăлла хăрушлăхне пур енлĕ тишкерсе, айăпланаканăн унччченхи айăпĕн обществăлла хăрушлăхне пăхса суд А. Пикусовăн уннченхи айăплав виçи çителĕксĕр пулнине тата патшалăх айăплавçи, район прокурорĕн çумĕ Ю. Семенов ыйтнине шута хурса, йĕрке пăсакана ирĕкрен хăтармасăр юсама тата тивĕçлĕ воспитани пама май çуккине шута илсе ăна тăхăр уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăнать. Унччченхи айăплав виçи вĕçленменнине шута илсе икĕ айăплав хушăннипе суд А. Б. Пикусова çирĕп режимлă колонире 4 çул та 11уйăх ирĕкрен хăтарса тытма приговор кăларать.

Саккун вăл пуриншĕн те саккун. Çакна манас марччĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Следстви вĕçленчĕ

# Эрех сутнăшăн айăпларĕç

Иртнĕ çул вĕçĕнче район сучĕ Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 238-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление икĕ хут тунăшăн – тавар туянаканăн сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан продукцие упранăшăн тата сутнăшăн Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче пурăнакан В. П. Кабуркинан ĕçне пăхса тухрĕ. Мĕнле аталаннă-ха йĕркене пăсасси?

2006 çулхи июньре В. П. Кабуркина каярахпа ĕçсе усă курма спиртлă шĕвеке сутса укçа тăвас тĕллевпе «Тавар туянаканăн прависем çинчен» РФ Саккунĕн 7-мĕш статйине (унпа килĕшӳллĕн тавар туянаканăн ун тĕлĕшпе вăл пурнăçшăн тата сывлăхшăн сиенсĕр пулнине пĕлмелле), «Апат-çимĕç продукчĕсен хăрушсăрлăхĕ çинчен» РФ Саккунĕн 15-мĕш статйине (унпа килĕшӳллĕн реализацилеме пăхнă продукцин çыннăн физиологи ыйтăмне тивĕçтермелле) пăсса, РФ Саккунĕ ыйтакан этил спиртне хатĕрлеме, упрама тата сутма кирлĕ ятарлă лицензисĕрех, хăйĕн хăтланăвĕпе общественноçшăн хăрушлăх кăларса тăратнине пĕлсех, сутса тупăш илес тĕллевпе, Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Вăрманкасси ялĕнче паллă мар çынран автомашинăсен кантăкĕсене шăнса ларсан çума пăхнă шĕвеке 5 литрлă канистрпа туяннă. Ăна апат-çимĕçре усă курма юраманнине пĕлсе тăрсах. Сутлăх хакне палăртса В.П. Кабуркина ăна сутас тĕллевпе килĕнче упранă. 2006 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче 15 сехет те 40 минутра хăйĕн килĕнче Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ильинка тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче Центральнăй урамри 66-мĕш çуртра 1995 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 171-мĕш номерлĕ «Этил спиртне, алкоголь тата спирт пур продукцие хатĕрлессипе сутассине патшалăх йĕркелесси çинчен» Федераллă саккунăн 18 тата 26-мĕш статйисем ыйтнине пăхăнмасăр, Раççей Федерацийĕн «Потребительсен правине хӳтĕлесси çинчен» Саккунăн 7-мĕш статйине, «Апат-çимĕç продукчĕсен хăрушсăрлăхĕпе пахалăхĕ çинчен» РФ Саккунĕн 10,15,17, 20 статйисене пăсса укçа тăвас тĕллевпе хăй реализацилекен спиртлă алкоголь продукцийĕ çын пурнăçĕшĕн хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене тивĕçтерменнине пĕлсе тăнă çинчех В. П. Грачева канистрти спирт заводра тунă апат-çимĕç спирчĕ тесе суйса 0,25 литрлă «Забытая водка» этикеткăллă эрех кĕленчипе пĕр кĕленчене 30 тенкĕпе сутать. Кĕленчери спирт этил спирчĕн шăршиллĕ, анчах ют туталлă пулнă тата кĕленче тĕпне вĕтĕ япаласем анса ларнă. Кĕленчери 243 мл спиртăн çирĕплĕхĕ 73 градус пулнă. Спиртлă çак шĕвек «Водка тата особый водкăсем. Пĕтĕмĕшле техника условийĕсем» Р51355-99 ГОСТ требованийĕсене тата «Апат-çимĕç чĕртаварĕнчен хатĕрленĕ ректификациленĕ этил спирчĕ. Техника условийĕсем» Р51652-2000 ГОСТа тивĕçтермест.

Вăлах, В. П. Кабуркина, 2006 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче 16 сехет тĕлĕнче хăйĕн килĕнче Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Вăрманкасси ялĕнче Центральнăй урамри 66-мĕш çуртра 1995 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 171-мĕш номерлĕ «Этил спиртне, алкоголь тата спирт пур продукцие хатĕрлессипе сутассине патшалăх йĕркелесси çинчен» Федераллă Саккунăн 18 тата 26-мĕш статйисем ыйтнине пăхăнмасăр, Раççей Федерацийĕн «Протребительсен правине хӳтĕлесси çинчен» Саккунăн 7-мĕш статйине, 2000 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче йышăннă 29-мĕш номерлĕ «Апат-çимĕç продукчĕсен хăрушсăрлăхĕпе пахалăхĕ çинчен» РФ Саккунĕн 10,15,17, 20 статйисене пăсса укçа тăвас тĕллевпе хăй реализацилекен спиртлă алкоголь продукцийĕ çын пурнăçĕшĕн хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене тивĕçтерменнине пĕлсе тăнă çинчех В. П. Грачева канистрти спирта заводра тунă апат-çимĕç спирчĕ тесе суйса 0,5 литрлă «Живое пиво Чувашии»» этикеткăллă кĕленчепе 73,4 градуслăскерне 278 миллилитрлă пĕр кĕленчене 23 тенкĕпе сутать. Кĕленчери спирт этил спирчĕн шăршиллĕ, анчах ют туталлă пулнă тата кĕленче тĕпне вĕтĕ япаласем анса ларнă. Унăн çирĕплĕхĕ чăнах та 73,4 градус пулнă.

Спиртлă çак шĕвек «Водка тата особый водкăсем. Пĕтĕмĕшле техника условийĕсем» Р51355-99 ГОСТа тата «Апат-çимĕç чĕртаварĕнчен хатĕрленĕ ректификациленĕ этил спирчĕ. Техника условийĕсем.» Р51652-2000 ГОСТа тивĕçтермест. Хăйĕн хăтланăшĕсемпе В. П. Кабуркина Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 238-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление икĕ хут тунă: тавар туянаканăн сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушсăрлăхне тивĕçтермен продукцие упранă тата сутнă.

Район сучĕ çак ĕçсене пĕрлештерсе пăхса тухса В.П. Кабуркинана 4 пин тенкĕ штраф пама йышăну турĕ.

**М. ТАРАСОВ, уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе ĕçлекен следователь.**